27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
АВГУСТ
16
юнкун
161(6656) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Хатĕрлев пункчĕсенче большевикла йĕрке пултăр

Колхозсем тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен пĕрремĕш тивĕçне пурнăçа кĕртеççĕ. Государствăна тырă парасси массăллăн пуçланчĕ. Хатĕрлев организацийĕсен тырă йышăнас ĕçе кăтартуллăн организацилемелле, хатĕрлев пункчĕсенче большевикла йĕрке тумалла. Вăрçăн татăклă тапхăрĕнче çĕршывпа фронта пĕтĕм вăйран пулăшас ĕмĕтпе хатĕрлев пунктне тырă турттарса пыракан колхозниксемпе колхозницăсен кунта кӳренмелле ан пултăр.

Çĕршывпа халăх умĕнчи ответлăха туйса тăракан хатĕрлев работникĕсем çĕнĕ тырă йышăнма лайăх хатĕрленчĕç. Ку енĕпе Вăрмар, Вăрнар, Йĕпреç тата ытти хăшпĕр хатĕрлев пункчĕсене палăртма пулать. Вăрмар хатĕрлев пункчĕн управляющийĕ Блинов юлташ, хăйне шанса панă ĕçе лайăх пурнăçлас тесе, çине тăрса тăрăшать. Пысăк хуçалăхăн чăн-чăн хуçи пек пулса, вăл, аякран пулăшасса кĕтсе тăмасăрах, склад çурчĕсене юсама стройматериалсем те, çынсем те вырăнтах тупнă. Вăл тĕп çуртйĕрсене, тарасасен хуçалăхне, тырă тĕрĕслемелли лабораторие тата хатĕрлев пункчĕсем патне пымалли çулсене вăхăтра юсаттарма тăрăшнă. Çапла Вăрмар хатĕрлев пункчĕ çĕнĕ тырра йышăнма тĕплĕн хатĕрленсе çитнĕ. Çавăн пекех Куславкка хатĕрлев пунктĕнче те складсене пурне те юсанă, шалтан складсене известкăпа шуратса тасатнă, çулсене тӳрлетнĕ. Тырă леçме пыракансем валли чей ĕçмелли çурт уçнă, унта пĕр вăхăтрах 150 çын апатланма пултарать. Хĕрлĕ кĕтес валли хаçат-журналсем çителĕклĕ. ВКП(б) райкомĕ кунта агитациллĕ-массăллă ĕçе туса пыма пропагандист уйăрнă.

Çав вăхăтрах республикăри чи пысăк хатĕрлев пункчĕсенче — Шупашкарпа Канаш хулисенче тырă йышăнмашкăн тӳсме çук япăх хатĕрленнĕ. Шупашкар хатĕрлев пункчĕн директорĕ Тимофеев, Канаш хатĕрлев пункчĕн директорĕ Шурбин юлташсем çак питех те ответлă ĕç çине пачах та ответсăррăн пăхаççĕ. Шупашкар хатĕрлев пунктĕнчи 10 складран 5-ĕшне çеç юсанă. Складсем патне пымалли çулсене тӳрлетмен. Çăмăр çусан лашасем тăратмалли вырăнсем çук. Тырă паракансем валли чей ĕçмелли пӳлĕм организацилемен, хĕрлĕ кĕтес туман.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕпе хула совет исполкомĕ тата хулари суту-илӳ организацийĕсем те хатĕрлев пункчĕн ĕçĕпе сахал интересленеççĕ. Хатĕрлев пунктне пулăшасси, унта хĕрлĕ кĕтес тăвасси, ăна радио, хаçат-журналсем, плакатсем тупса парасси, унта агитациллĕ-массăллă ĕçе туса пыма çын уйăрасси, чей ĕçмелли çурт, куллен кирлĕ таварсем сутмалли ларексем уçасси — пĕтĕмпех вĕсен ĕçĕ.

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленире хатĕрлев органĕсене тырпул йышăнас ĕçе кăтартуллăн организацилеме, тырă йышăнма тытăничченех складсене, сушилкăсене, шăналăк-михĕсене, виçесемпе тарасасене, лабораторисене пĕтĕмпех хатĕрлесе çитерме, тырпулпа ытти тĕрлĕ продуктсене талăкĕ-талăкĕпех йышăнмалла тума, тырпул паракансемпе вăхăтра та йĕркеллĕ расчет тума, çакна валли хатĕрлев пункчĕсене кирлĕ инвентарьпе тырă йышăнмалли квитанцисен бланкисене çителĕклĕ тупса пама хушнă.

Суту-илӳ организацийĕсен — Наркомторгпа Чăвашсоюзăн, партипе правительство кăтартăвĕ тăрăх, тырă паракансем валли чайнăйсем тата куллен кирлĕ таварсем сутмалли ларексем организацилес пулать.

Парти организацийĕсен хатĕрлев пункчĕсенче культурăллă-массăллă ĕçе йĕркелемелле. Тырă леçме пыракансене фронтри тата тĕнчери ĕçсемпе паллаштарма, хаçат-журналсем вуласа пама партипе комсомол активĕнчен агитаторсем уйăрас пулать. Кашни хатĕрлев пунктĕнче хĕрлĕ кĕтес уçмалла.

Партипе правительство йышăннă тăрăх, кăçал республикăри апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариачĕн предприятийĕсен — спирт заводĕсен, армансен тата Шупашкарти сăра завочĕн хăйсен склачĕсене вăхăтлăха чылай тырпул йышăнмалла пулать. Кунсăр пуçне тата чугун çул станцийĕсенче, раз'ездсемпе пристаньсенче çĕнĕрен хатĕрлев пункчĕсем уçмалла. Çав ĕçсене тума райсовет исполкомĕсен, горисполкомсен хатĕрлев органĕсене тивĕçлипе пулăшу парас пулать.

Хатĕрлев пункчĕсенче тырă типĕтес, сортласа тасатас ĕçсене те лайăх йĕркелемелле. Совет органĕсен сушилкăсем валли вутă турттарса пама пулăшмалла. Тăван пекех хатĕрлев пункчĕсенче пушар тан сыхланас, тырпула вăрлассинчен упрас ĕçсене те çирĕп организацилас пулать.

Тăван çĕршывпа фронтшăн кирлĕ тырра йышăнас ĕçре ниепле чăрмавпа кăлтăк та ан пултăр. Çĕнĕ тырра тирпейлĕ те тĕрĕс йышăнса, ăна тĕплĕн пăхса усрасси— хатĕрлев работникĕсен çĕршыв умĕнчи тивĕçĕ пулса тăрать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 14-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 14-мĕшĕнче пирĕн çарсем ПСКОВ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре малалла тапăнса пынă, АНТСЛА хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ВЕРХУЛИСТА, КАХКУ, ЦИРГАСКИ, СЫМЕРПАЛУ, ТСОРУ, СЯННА, МУРАТИ, СКРЫНИ, АЙЗУПЕ, САЛЬНИ ятлă пысăк ялсем тата ВАГУЛА, СЫМЕРПАЛУ ятлă чугун çул станцийĕсем.

РАСЕЙНЯЙ (РОССИЕНЫ) хули районĕнче пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă.

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пына, августăн 14-мĕшĕнче нимĕçсен БОБР шывĕ çинчи оборонин çирĕплетнĕ хăватлă районне — ОСОВЕЦ хулипе крепоçне штурмласа туртса илнĕ.

САНДОМИР хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен контратакисене сире-сире янă, ВИСЛА шывĕн сулахай хĕрринчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Августăн 13-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 79 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 22 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Псков хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем, тăшмана хыççăнах хăваласа пырса, 25 километр малалла кайнă. Совет боецĕсем нумай пĕчĕк юханшывсем урлă каça-каça кайнă. Нимĕçсем çав шывсемпе хушăри оборона позицийĕсем вырăнне усă курнă. Тăшман Антсла хулине пырса кĕмелли çулсем çинче уйрăмах хытă хирĕç тăрса çапăçнă. Антсла хули вăл Рига хулипе Таллин хули хушшинчи чугун çултан 22 километр хĕвелтухăçнерехре ларать. Хаяррăн çапăçнă хыççăн пирĕн çарсем Антсла хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ. Тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату кӳнĕ. Пирĕн пĕр часть кăна 400 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă, 29 тупă, 18 миномет, (вĕсенчен 7-шĕ ултă кĕпçеллисем), 44 пулемет, 3 радиостанци, 2 боеприпас склачĕ тата пĕр апат-çимĕç склачĕ тытса илнĕ. Псков хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем нимĕç пехотин батальонне аркатса тăкнă, 270 гитлеровеца тыткăна илнĕ. Батальонăн пĕтĕм хĕçпăшалĕпе обозне тытса илнĕ.

* * *

Рассейняй хули районĕнче паян ирхине тăшман танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсем пирĕн позицисене атакăлама тытăннă. Нимĕçсене пирĕн артиллерипе минометсем хăватлăн пеме тытăннă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен темиçе çĕр вилли выртса юлнă, персе çĕмĕрнĕ темиçе танк тăрса юлнă. Гитлеровецсен ирĕксĕрех малтанхи позицисем çине чакмалла пулнă. Тăшман часах çĕнĕрен контратакăсем тума тытăннă, анчах та нимĕнле çитĕнӳ те тăвайман. Çапăçусем халь те чарăнман.

Пирĕн авиаци хĕвелтухăç Пруссири чугун çул станцийĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Эйдкунен станцийĕнче бомбăсем чугун çул эшелонĕсем хушшинче çурăлса кайнă. Вайлă пушар тухнă. Пушарта вайлă взрывсем пулнă. Шталлупенен станцийĕнче чугун çулăн виçĕ çуртне пĕтерсе тăкнă, темиçе çар эшелонне вут тивертсе янă. Чылай тĕлте чугун çул линине ишнĕ.

* * *

Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсем паян ирхине Бобр шывĕ çинчи Осовец хулипе крепоçне штурмласа туртса илнĕ. Нимĕçсен оборонинче Осовец крепоçĕ паллă вырăн йышăнса тăнă, вăл Хĕвелтухăç Пруссин чиккисем патне пымалли çулсене хӳтĕлесе тăнă. Крепость тавра 16—20 метр сарлакĕш тарăн шăтăк чавса çавăрнă, шăтăка шыв тултарнă. Çав шăтăк хыçĕнче 10 метр çӳллĕш вал тунă. Крепость патне пымалли вырăнсенче тăшман дотсемпе дзотсем туса тултарнă. Крепость ăшĕнчи 5 фортра кашнинчех хăватлăн персе тămалли хатĕрсем лартса тултарнă. Енер Осовеца пырса кĕмелли вырăнсенче хаяр çапăçусем хĕрсе кайнă. Пирĕн артиллеристсемпе летчиксем тăшманăн персе тăмалли вырăнĕсене пусарса лартнă. Пирĕн крепоçран кăнтăртарахра тата çурçĕртерехре наступлени туса пыракан çарсем шоссе çулĕсем çинчен пăраннă та, шурлăхсемпе тата çарансемпе пырса, крепость патнех çитсе тăнă. Пирĕн боецсем, алă айĕнчи япаласемпе каçăсем туса, шыв тăракан çав шăтăк урлă каçнă та хулана вăркăнса кĕрсе кайнă. Штурмлакан ушкăнсем тăшманăн нумай вăхăтлăха тунă пемелли вырăнĕсене сирпĕте-сирпĕте янă. Гранатăсем вăркăнтарса, штыксемпе чике-чике, нимĕçсене укрепленисенчен çапа-çапа кăларнă. Тул çутăлса килнĕ тĕлелле пирĕн çарсем тăшман гарнизонне йăлтах çапса аркатнă та Осовец крепоçне пĕтĕмĕшпех туртса илнĕ.

Высокий Мазовецк ялĕ районĕнче тăшман танкĕсемпе пехоти кун каça 19 контратака тунă. Пирĕн чаçсем тăшман контратакисене пурне те ăнăçлă çирсе янă, 600 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ, 8 танкпа хăй тĕллĕн çӳрекен тупă пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Сандомир хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Висла шывĕн сулахай хĕрринчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă. Пĕр соединени чаçĕсем тăшман танкĕсемпе пехотин темиçе контратакине сирсе янă та, малалла куçса, лайăх позицисем йышăннă. Тăшман пехотин батальонне пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 13 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен 8 туппине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Пĕр участокра контратака тунă тăшмана пирĕн засадăра тăракан танксем сасартăк атакăланă. Кĕске тытăçу хыççăн гитлеровецсем васкасах каялла чакнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 350 вилли выртса юлнă, çунса кайнă 6 танкпа 5 бронетранспортер тăрса юлнă. Пирĕннисем 2 танкпа 3 бронетранспортер тытса илнĕ.

Балтика тăрăхĕнчи 2-мĕш фронт çарĕсем кăçалхи июлĕн 10-мĕшĕпе августăн 10-мĕшĕ хушшинче наступлени тунă вăхăтра нимĕçсем тӳснĕ çухатусем тата пирĕн çарсем тытса илнĕ трофейсем

БАЛТИКА ТАРАХĔНЧИ 2-мĕш фронт çарĕсем кăçалхи июлĕн 10-мĕшĕпе августăн 10-мĕшĕ хушшинче наступлени тунă вăхăтра тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен çакăн пек çухатусем тӳстернĕ:

ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ: самолетсем — 167, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем — 147, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 1.000 ытла, минометсем — 300, пулеметсем — 1.460, автомашинăсем — 1.560. Тăшманăн, вилнисене кăна шутласан та, 60.000 салтакĕпе офицерĕ ытла пĕтнĕ.

Çав вăхăт хушшинчех БАЛТИКА ТĂРАХĔНЧИ 2-мĕш фронт çарĕсем çакăн пек трофейсем ТЫТСА ИЛНĔ: танксем — 79, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—820, минометсем—200, пулеметсем—1.653, винтовкăсемпе автоматсем—10.899, радиостанцисем—84, автомашинăсем—869, мотоциклсем—199, тракторсемпе тягачсем—94, çар хатĕрĕсем тиенĕ лавсем—467, лашасем—1.877, паровозсем—14, вагонсем—203, боеприпас, хĕçпăшал, снаряжени тата апат-çимĕç склачĕсем—203.

Тăшманăн 9.636 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Çапла ĕнтĕ, БАЛТИКА ТАРАХĔНЧИ 2-мĕш фронт çарĕсен пĕр уйăх хушшинчи наступленийĕ вăхăтĕнче нимĕçсем хăйсен çар техникин чи кирлĕ хатĕрĕсемпе çыннисене пĕтĕмпе çакăн чухлĕ çухатнă: тыткăна лекнисемпе вилнисем—69.636 çын, самолетсем—167, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—226, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—1.820, минометсем—500, пулеметсем—3.130, автомашинăсем—2.429.

СОВИНФОРМБЮРО.

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариатĕнче

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе пĕр Халăх Комиссариачĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн июль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Володин тата Слуцкий юлташсем главнăй инженерсем пулса ĕçлекен заводсене иккĕмĕш премисем памалла тунă.

ВЦСПС-па Хатĕрлев Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС-па Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕ, кайăк чĕртаварĕ хатĕрлес тĕлĕшпе облаçсем хушшинче пыракан ăмăртăвăн 1944 çулхи иккĕмĕш кварталти итогĕсене пăхса тухса, пирĕн Чăваш республикинчи Заготживсырье контори мала тухнă тесе йышăннă, ăна иккĕмĕш преми памалла тунă.

Çав ятпа СССР Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕ, Пĕтĕм Союзри Заготживсырье управленийĕ тата Заготживсырье работникĕсен Союзĕн Центральный Комитечĕ республикăри кайăк чĕртаварĕ хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекенсене тата сунарçăсене саламласа телеграмма янă, малашне çав паха чĕртавара хатĕрлес енĕпе татах та лайăхрах ĕçлеме, профессисем тăрăх социализмла ăмăртса ĕçлессине анлăн сарса яма суннă.

Колхоз хирĕнчи çĕнтерӳ фронтри çĕнтерӳпе пĕрех

Укерчĕк çинче: Я. М. Свердлов ячĕпе тăракан колхозри (Муркаш районĕ) стахановка **М. Ф. Блинова** юлташ. Вăл 63 çула кайнă пулин те, заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пырать.

Сеялкăсемпе туллин усă кураççĕ

ЧУРАЧĂК, августăн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Кашни колхозрах ыраш акас ĕç пырать. Паянхи кун тĕлне районĕпе 2000 гектара яхăн акнă. Уйрăмăнах «Красное Сормово», «Трактор», «Красный флот», «Буйга» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсенче ĕç ăнăçлă пырать. Вĕсем кашниех 30—50 гектар акнă.

Ыраш акма кăçал пирĕн колхозсем лайăх хатĕрленсе тухрĕç. Çĕртме пуссине пĕтĕмпех икĕ хут сухаланă. Çапла вара сеялкăсемпе акма питĕ аван. Кашни колхозрах сеялкăсемпе туллин усă кураççĕ, районра пĕр сеялка та ахаль ларакканни çук. Çĕртме пуссине курăксемпе йышăннă участоксене те ака валли лайăх хатĕрлерĕмĕр. Кая юлса сухалани пулман.

«Красная Чувашия» колхозра ыраш акмалли пусăра 15 гектар çинче клевер ӳсетчĕ. Колхоз çав участокран нумай утă туса илчĕ. Халĕ ăна тракторпа тарăн сухаласа ыраш акма хатĕрленĕ.

Ыраш акас ĕçе лайăх тăваççĕ. Тунă ĕçе пур çĕрте те пахалăх комиссийĕсем йышăнаççĕ.

Ф. АНИФЕРОВ,
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Пахалăх комисси членĕ

СОВЕТСКОЕ. Мăн Чурашри «Прогресс» колхозăн 8-мĕш бригадинчи колхозница Татьяна Михайлова ĕçре нихçан та ӳркенсе тăмасть. Вăл яланах ĕçе пуçарса пырать, тӳрĕ кăмăлпа, лайăх ĕçлет. Иртнĕ кĕркунне вăл акаçă пулса ĕçлерĕ. Вăл акнă тырă юнашарти 7-мĕш бригада тырринчен раснах лайăх пулчĕ. «Пирĕн Михайлова хăйĕн сăмахне яланах ĕçпе çирĕплетсе пырать», — теççĕ колхозниксем. Çавăнпа та ăна колхозниксем пахалăх комиссин членĕ пулма уйăрнă.

Пахалăх комисси членĕ Михайлова юлташ хăйĕн ĕçне пикенсе туса пынине пула, 8-мĕш бригада çуракине пысăк пахалăхпа иртерчĕ. Халĕ, тырпул пухса кĕнĕ вăхăтра та, Михайлова юлташ ĕçĕн пахалăхне тĕплĕн тĕрĕслесе тăрать.

А. ФЕДОРОВА.

Строительство бригадинче

МУРКАШ. Нумаях пулмасть Карманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхозри строительство бригади сурăх ферми валли çĕнĕ вите туса лартрĕ. Бригада ытти çуртсене те юсаса тухрĕ.

Я. СИГАЙ.

Виçĕ колхозăн ăмăртăвĕ

ИШЛЕЙ, августăн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Кибечкасси ялсоветне «Большевик», «Красный танк» тата «Партизан» колхозсем кĕреççĕ. Вĕсем виççĕшĕ те пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Социализмлă ăмăрту уйрăмăнах вăрнарсем чĕнсе каланине сӳтсе-явнă хыççăн анлăн саралса кайрĕ. Кашни колхозникпе колхозница ăмăртса ĕçлеме тытăнчĕ. Уйрăм сдельщинăпа ĕçлени ĕç тухăçлăхне нумай ӳстерчĕ. Ыраш вырнă чухне «Большевик» колхоз членĕсем нумайĕшĕсем кулленхи нормăна ытлашшипех тултарса ĕçлерĕç. Çурлапа выракансем Л. Пайманова, К. Костина юлташсем ĕç нормисене 170—180 процент, А. Пайманова 290 процент, М. Юманова—210 процент тултарса пычĕç. Клавдия Костина ертсе пыракан звено, пĕтĕмĕшпе илсен, ыраш вырнă чухне хăйĕн планне 110 процент тултарчĕ. «Большевик» колхоз 5 кун хушшинче ыраш вырса пĕтерчĕ. Çак колхозри И. Н. Волков юлташ ертсе пыракан бригада колхозра мала тухрĕ, кунта ĕç пахалăхĕ те, хăвăртлăхĕ те лайăх.

«Большевик» колхоз халĕ пикенсех çуртырисем вырать, ыраш кĕлти турттарса капана хывать. Паянхи кун тĕлне 20 гектар ыраш акнă.

«Большевик» колхозри кашни бригадăрах кам мĕнле ĕçленине кăтартакан хăма пур, «боевой листоксем» те вăхăтра тухса тăраççĕ. Пĕтĕм колхозĕпе «Çулăм» ятлă стена хаçачĕ тухать. Колхозниксене кунне икĕ хутчен вĕри апат çитереççĕ, 32 ача валли ясли тунă.

Ăмăртура иккĕмĕш вырăн «Красный танк» колхоз йышăнать. Ку колхоз та ыраш вырса пĕтерчĕ. Колхозниксем кунта кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Халĕ тулă выраççĕ. Çумăрлă кунсемпе усă курса, «Красный танк» колхоз пĕр авăн турĕ, унта кунне 15 урапа тырă типĕтме пулать. Колхоз халĕ ыраш акма тытăнчĕ. Кунта та ĕçе уйрăм сдельщинăпа организациленĕ. Çуртырисене 20 гектара яхăн вырнă.

Анчах та «Партизан» колхоз юлса пырать-ха. Кунта паянхи куна та ыраш вырса пĕтермен. «Партизан» колхоз ĕçре юлса пынин сăлтавĕ — ĕçе уйрăм сдельщинăпа туманнинче.

Колхозсем хушшинчи социализмлă ăмăрту мĕнле пынине яланах тĕрĕслесе тăратпăр. Колхозниксемпе колхозницăсен ĕçлес кăмăлĕ пысăк. Анса пулнă тырпула вăхăтра тата тăкаксăр пухса кĕртессишĕн кунĕн-çĕрĕн ĕçлетпĕр.

С. ПАЙМАНОВ,
Кибечкасси ялсоветĕн председателĕ.

Комбайнсем чуркăпа ĕçлеççĕ

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче горючи Хĕрлĕ Çара хĕçпăшал пекех кирлĕ. Çавăнпа та горючие перекетлесси, тракторсемпе комбайнсене йывăç топливăпа (чуркăпа) ĕçлеттересси калама çук паха ыйту пулса тăрать. Çак ыйтăва ăнăçлăн татса пани колхозсене тырпулсем пухса кĕртес ĕçре нумай пулăшма пултарать.

Кăçал пирĕн МТС горючи ытти МТС-сенчен нумай кая илмен, анчах та вырăнти топливăпа усă курнă май, тракторсемпе ĕçлемелли плана (сухалани çине куçарса шутласан) эпир паянхи кун тĕлне тултарнă, теме пултаратпăр.

Пирĕн МТС коллективĕ кăçал 9 мотора чуркăпа ĕçлемелле турĕ.

Ку ĕçе кашни МТС-ах тума пултарать. Коллектор çумне икĕ юплĕ труба çыпăçтармалла. Пĕр юппи тăрăх сывлăш пырать, тепĕр юппи тăрăх газ пырать. Çак газ «Т—2—Г» маркăллă трактортăн шыв уйăракан хатĕрĕнчен резиналанă кĕпçе тăрăх пырать. Моторăн хĕстермелли вайне ӳстерес тесе, мотор пуçĕнчи блок айне алюминирен тунă планка хумалла. Çапла вара камера ытларах хĕстерет тата моторăн вăйĕ те ӳсет. Тӳрех калас пулать, йывăçпа ĕçлекен комбайнсем краççинпа е бензинпа ĕçлекеннисенчен юлмаççĕ.

Паянхи кун тĕлне эпир комбайнсемпе 300 гектар ытла тырă вырса пухрăмăр. Пирĕн комбайнерсенчен уйрăмах Маркиянов, Сергеев, Семенов юлташсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем 60—65-шер гектар вырса пухрĕç те ĕнтĕ. Кунта уйрăмах А. И. Иванов комбайнерăн ĕçне палăртмалла, вăл йывăç çунтарсах 45 гектар ытла тырă вырса пухрĕ.

Социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярса, эпир хамăр çине илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлетпĕр.

Г. ИВАНОВ,
Пĕпрес МТС-ĕн директорĕ.

Кунĕн-çĕрĕн ĕçре

МУРКАШ, августăн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). «Аврора» колхоз членĕсем кунĕн-çĕрĕн хирте ĕçлеççĕ. Тырă вырма тухнă хыççăн 5 кунтан ыраш çапма тытăнчĕç. Акмалăх çителĕклĕ вăрлăх хатĕрлерĕç, государствăна обязательство тăрăх 36 центнер леçсе пачĕç.

Кĕрхи тырăсене вырса пĕтернĕ. Тырă вырнă çĕрте Д. Иванова, М. Сорокина, Ф. Тучева, А. Григорьева, А. Комарова юлташсем кулленхи нормăна 200 процент тултарса ĕçлерĕç. Çак колхозницăсем вырнă ыраша çĕмеле те хăйсемех хывнă, çапла вара вĕсем пĕр кунта 4 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ.

Ыраш вырса пĕтернĕ колхозсен шучĕ кунсерен ӳссе пырать. Çуртырисем те çитĕннĕ май колхозниксем, ыраш вырса пĕтернĕ хыççăнах, çуртырисем вырма тытăнаççĕ.

Районри колхозсем ыраш акма тухрĕç. Паянхи кун тĕлне пурĕ 482 гектар акнă. Анчах та Пашалукассинчи ялсоветĕнчи «Красный Октябрь», «Первое Мая» колхозсем ыраш акма халĕ те тытăнман-ха. Уйрăм колхозсенче ыраш акас ĕçре агротехникăна пăсаççĕ. «Красное Оточево» колхозăн сеялка пур, анчах та унпа усă курмаççĕ, алăпах акаççĕ.

Т. ИВАНОВ.

Агитаторсем хирте

Шăхасан районĕнчи «Соревнование» колхоз ултă кун хушшинче ыраш вырса пĕтерсе çĕмеле хыврĕ. Ыраш вырнă çĕрте И. Федорова, В. Александрова, А. Егорова колхозницăсем кулленхи нормăна 160—180 процент тултарса ĕçлерĕç. Пĕтĕмпе вырса пĕтериччен пĕр пайне турттарса çапрĕç, государствăна обязательство тăрăх чылай пачĕç тата вăрлăх та çителĕклĕ хатĕрлерĕç. Халĕ кĕлте турттарса капана хываççĕ, колхозсем ыраш акаççĕ.

Тырпул пухса кĕртес ĕç «Соревнование» колхозра ăнăçлă пыни, чăн малтанах, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленине колхозниксемпе колхозницăсене тĕплĕн ăнлантарса панинчен килет. Çак паха документа эпир кашни бригадăрах тĕплĕн сӳтсе-явнă, кашни колхозникех ăнлантарса панă.

Уйрăмăнах З. Иванов агитатор паха тĕслĕхсем кăтартать. Вăл колхозниксен кашни пушă вăхăчĕпе усă курать, агитаци ĕçне колхозри ĕçпе çыхăнтарма пултарать. Д. Федорова колхозница ĕçе ир тухман пирки нормăна тултараймасчĕ. Иванов юлташ унпа уйрăм каласнă, килçуртĕнчи хăшпĕр ĕçсене майлама пулăшнă. Çапла вара Федорова юлашки вăхăтра нормăна ытлашшипех тултарма пуçларĕ. Колхозра халĕ пикенсех çуртырисем выраççĕ.

А. АНТОНОВ.

Торф кăларнă çĕрте

Виçĕ-тăватă çул каярах Атăл леш енчи шыв-шурлă вырăн пĕр усăсăрах саралса выртнă. Халĕ çав вырăна пăхатăн та куç савăнать. Унта — çĕршыв пуянлăхĕ. торф. Вут шаршанĕ пек купаласа тухнă торф шаршанĕсем çуллахи ăшă çилпе, çутă хĕвел ăшшипе типсе тăраççĕ.

Вăрманти шурлăхăн вĕçĕ-хĕрри курăнмасть. Эпир, шыв канавĕсемпе йывăç тĕмисем урлă сике-сике каçса, малалла утса пыратпăр.

— Пĕр кун хушшинче эсир пирĕн участоксем тăрăх утса тухаймăр. Авă, мĕн тери сарăлса выртаççĕ вĕсем. Кунтах акă чугун çул линийĕ, паровозсем. Унта рабочисем ĕçе çӳреççĕ, типсе çитнĕ торфа электростанцие турттараççĕ, — тет торф предприятийĕн представителĕ.

— Ку Андрей Михайлович Блохин юлташ ертсе пыракан 3-мĕш «Б» карьер, — чарăнса тăчĕ вăл, çитес çĕре çитсен. Пĕр карьерта виçĕ бригада ĕçлет. Бригадăсем звеносене пайланаççĕ. Ăмăртура мĕн сезон пуçланнăранпах Мария Ивановăн бригади малта пырать. Вăл предприятин куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тахçантанпах хăй аллинче тытать. Ку бригадăра техник пулса комсомолка Шелег юлташ ĕçлет. Бригада сезонри плана пĕр уйăх малтан, июлĕн 12-мĕшĕ тĕлне пурнăçланă. Бригадăра 14 звено. Вĕсем пурте, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, нормăна иртерсе тултараççĕ. Сăмахран, Н. Степанова юлташ ертсе пыракан звенонах илер. Вăл стахановла звено. Звеновод Степанова юлташ хăйчи йывăр ĕçре, торфа кĕреçепе касса кăларнă çĕрте, ĕçлет. Ыттисем — виççĕшĕ çав торфа турттарса, купаласа пыраççĕ. Вĕсем, торф кăларнă çĕрте темиçе çул хушши ĕçлесе, хăвăрт та лайăх ĕçлеме вĕренсе çитнĕ. Вĕсем патне кирек-кам пырсан та, вĕсем ĕç пăрахса каласса тăмаççĕ, калаçнă хушăрах ĕçĕ те пулса пырать. Ĕçчен хĕрсем нормăпа кулне 2.800 кирпĕч касса хатĕрлес вырăнне 6.000—7.000 кирпĕч касса кăлараççĕ. Çапла вĕсем пĕр çултах икĕ сезонри плана тултарнă, виççĕмĕш сезон планне те кăçалах тултарма шутлаççĕ.

Вĕсем тăваттăшĕ те Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Моряк» колхозран. Пĕр колхозăн хĕрĕсем пурте пĕр пек ĕçчен. Звено чысĕшĕн вăя шеллемесĕр ĕçлеççĕ.

Лайăх ĕçленĕшĕн Степанова юлташа Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă, костюмлăх материал, сăм тутăр тата пусмa таварсем парса премиленĕ. Çапла хисеп туни ăна тата лайăхрах ĕçлеме пулăшнă. Хăйĕн примерĕпе вăл çĕнĕрен ĕçе килнĕ ял хĕрĕсене ĕçлеме вĕрентсе пынă.

Çамрăк стахановкăн пиччĕшĕ Отечественнăй аслă вăрçă хирĕнче тăшманпа геройла çапăçса пуçне хунă. Çак пысăк çухату ăна чĕререн хурлантарнă. Вăл, тăшмана пĕтĕм курайманлăхпа ылханса, тăван пиччĕшĕшĕн тăшмана хĕçпăшалпа тавăраймасассăн та, тылри стахановла ĕçпе Хĕрлĕ Çара пулăшать.

Кун пек стахановла ĕçлекен звеносем кунта татах та пур. Х. Ибраева, М. Самсонова, Волкова, Мария Иванова, Матрена Иванова звеновод-стахановкăсен ячĕсем те хисеплĕ вырăнта. Вĕсем кунсерен иккĕшер норма тултармасăр хăйсен карьерĕнчен тухмаççĕ.

Торф предприятийĕ, вăрçă вăхăтĕнчи мĕнпур йывăрлăхсене çĕнтерсе, государство планне тултарассишĕн кĕрешет. Предприяти сезонри плана тултарасси нумаях юлман ĕнтĕ. Сезон вĕçне çитиччен тата 10.000 тонна кăлармалла.

Татăклă кунсем юлчĕç. Торфяниксем çак юлашки кунсенче татах та ытларах вăя хурса ĕçлеме тивĕç. Çавăнпа та предприятири мĕнпур вăя мобилизацилени, ĕçлекенсене лайăх ĕçлеме пур майсем те туса пани, массăллă-ăнлантаруллă ĕçе вăйлатни кирлĕ. Калас пулать, партипе комсомол организацийĕсем кунта хăйсен ĕçĕсене çителĕксĕр туса пыраççĕ.

Торф ĕçĕнче ĕçлекенсенчен 60—75 проценчĕ çамрăксем. Апла пулин те комсомол организацийĕнче мĕн пурĕ те 13 член кăна. Кăçал пĕр çамрăка çеç комсомола илнĕ. Çакă ĕнтĕ вăл малта пыракан стахановецсене комсомола илес тĕлĕшпе пачах ĕçлеменни çинчен калать. Çамрăксем хушшинче, çавăн пекех комсомолецсем хушшинче те массăллă-ăнлантаруллă ĕçе кирлĕ пек организацилемен. Çавăнпа та торфяниксем Хĕрлĕ Çарăн кулленхи çĕнтерĕвĕсем çинчен, ют çĕршывсенчи хыпарсем çинчен пĕлмеççĕ. Вĕсене хаçатсем вуласа парассине йĕркелемен, бригадăсенче стена хаçачĕсем кăлармаççĕ. Комсомол организацийĕн секретарĕ Шефер юлташ ĕçе лайăхлатас вырăнне япăхтарса пынă. Комсомола кĕнĕ çамрăксене темиçешер уйăх билетсем памасăр тăнă, хăшпĕр комсомолецсем паянхи куна çитсе те апрельпе май уйăхĕсемшĕн член укçи тӳлемен. ВЛКСМ хула комитечĕ комсомолăн торф предприятийĕнчи организацине питех те сахал пулăшать. Кунта парторганизаци те пур, унта пĕтĕмпе 24 коммунист. Анчах вăл та комсомолăн авторитетне ӳстерес тата ĕçре ертсе пырас тĕлĕшпе сахал ĕçленĕ. Коммунистсем хăйсем те политикăллă пĕлĕве ӳстерсе пырас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Вĕсем Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине, çавăн пекех ВКП(б) историне те вĕренмеççĕ. Кунта лекцисемпе докладсем те хулари представительсемпе специалистсем пырсан çеç пулкалаççĕ. Çак ĕçе вырăнти интеллигенцие, инженерсемпе техниксене явăçтарман.

Парторганизаци секретарĕн Сырцов юлташăн тата ВЛКСМ организацийĕн çĕнĕ секретарĕн Васильева юлташăн тĕп çитменлĕхĕ вăл — активпа таччăн çыхăнса ĕçлеменни. Вĕсем пур ĕçе те хăйсем тума тăрăшаççĕ, актива явăçтармаççĕ.

Торф предприятийĕнчи рабочисем хушшинчи социализмлă ăмăртăва анлăн сарса, массăллă-политикăллă ĕçе кăтартуллăн йĕркелесе, рабочисен ĕçри хастарлăхне татах та ытларах ӳстермелле, промышленность валли паха топливо çителĕклĕ хатĕрлесе парассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелле.

З. МИТРОФАНОВА.
(«Чăваш Коммуни» корр.).

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ умĕн

Вĕренӳ çулне хатĕр

ШĂХАСАН. Чулкăмакари 7 çул вĕренмелли шкул иртнĕ çулта вĕренӳ çулне начар хатĕрленнĕччĕ. Шкулăн çителĕклĕ таран вутă пулмарĕ, чӳречисене те юсаманччĕ. Çавна пула ачасем уроксенче тумтирсемпе ларатчĕç. Çак çитменлĕхсем вĕсем шкул директорĕ ĕçе тивĕçлипе организацилеменнинчен килчĕç.

Чулкăмака шкулĕн коллективĕ, кăçал та çавăн пек çитменлĕхсем ан пулччăр тесе, çине тăрса ĕçлерĕ. Кунта халь директор пулса Отечественнăй вăрçă инваличĕ И. Архипов юлташ ĕçлет. Вăл вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçе учительсемпе шкул ачисене тата ялти массăна анлăн явăçтарчĕ. Çапла майпа вара классене йĕркене кĕртрĕç, стенасене шуратрĕç, кантăксем лартрĕç, партăсене юсарĕç, доскасене сăрларĕç, тумтир çакмаллисем турĕç. Вĕренӳре кирлĕ ытти япаласене те çителĕклĕ таранах хатĕрлерĕç.

Шкул ĕнтĕ вĕрентме тытăнма хатĕр. Çак ĕçре шкула ялсовет председателĕ Ефимов юлташ та чылай пулăшрĕ.

А. АНИСИМОВ.

Шкул мĕншĕн юлса пырать?

ЙĔПРЕÇ. Халĕ шкулсем умĕнче çĕнĕ вĕренӳ çулне тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илес задача тăрать. Районри хăшпĕр шкулсем çак задачăна ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Чăваш Тимешĕнчи туллимар вăтам шкулти учительсемпе шкул ачисем шкула валли 150 кубометр вутă касса хатĕрленĕ. «Большевик» колхоз членĕсем шкула вутă турттарса параççĕ. Шкул коллективĕ хăех класри партăсемпе доскасене юсанă, шкул çуртне йĕркене кĕртнĕ, вĕренӳре кирлĕ япаласене те çителĕклĕ хатĕрленĕ. Кăçал 1-мĕш класа вĕренме пыракан ачасене шута илсе тухнă.

Çавăн пекех Пучинкери туллимар вăтам шкулти учительсемпе шкул ачисем те вĕренӳ çулне тимлĕн хатĕрленеççĕ. Шкул çурчĕсене юсанă, вутă хатĕрленĕ.

Анчах та çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленесси пур шкулсенче те ăнăçлăн пулса пырать теме çук-ха. Хăшпĕр çĕрте директорсем хăйсем ĕçе тивĕçлипе организацилемеççĕ.

Район центрĕнчи вăтам шкул ытти шкулсемшĕн кăтартуллă шкул пулмалла. Анчах та кунта ĕçсем пачах урăхла. Шкул çĕнĕ вĕренӳ çулне начар хатĕрленет. Шкул чӳречисем çĕмрĕк, кăмакасем тата партăсем юсавсăр, вутă хатĕрлес тĕлĕшпе те ĕç начар пырать. Халиччен директор пулса ĕçленĕ Остроумов вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçе тивĕçлипе ертсе пыман. Хăй те ĕçлемен, учительсемпе шкул ачисене те ĕçе явăçтарман. Райçутĕç пайĕнче ĕçлекенсем те çак çитменлĕхсене пĕтерме пулăшмаççĕ.

Климовăри, Хурамалти шкулсем те çĕнĕ вĕренӳ çулне начар хатĕрленеççĕ.

П. КУРАКОВ.

Чăвашсен ташăпа юрă ансамблĕ 20 çул ĕçлет

Кăçал сентябрь уйăхĕнче чăвашсен ташăпа юрă ансамблĕ ĕçлеме пуçланăранпа 20 çул тултарать. Иртнĕ 20 çул хушшинче ансамбль чăваш халăхне вырăс тата чăваш композиторĕсен творчествипе паллаштарас, чăваш халăхĕн ташши-юррисене сарас тĕлĕшпе сахал мар ĕçлерĕ. Иртнĕ çулта кăна вăл виçĕ уйăх хушши Отечественнăй вăрçăн фрончĕсенче пулчĕ. Унта мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн воинĕсемпе командирĕсем валли концертсем нумай панă. Унсăр пуçне ансамбль Совет Союзĕнчи хуласенче — Мускавра, Хусанта, Куйбышевра тата ытти чылай хуласенче пулнă.

Хальхи вăхăтра ансамбль репертуарĕнче пилĕк çĕр произведени ытла шутланать. Вĕсем хушшинче чăваш юррисемсĕр пуçне совет композиторĕсен юррисем, совет çĕршывĕнчи ытти халăхсен юррисем тата классиклă произведенисем те пур.

Ташăпа юрă ансамблĕ хăй ĕçлеме пуçлани 20 çул тултарнине Чăваш автономийĕн 25 çулхи уявне хатĕрленнĕ тапхăрта кĕтсе илет. Халĕ ансамбль умĕнче тăракан тĕп задача вăл — Чăваш автономийĕн уявне кăтартуллăн хатĕрленесси пулать.

Çавăнпа та эпир сывăх вăхăтрах ансамблĕн йышне 50 çынна çитерме шутлатпăр. Ансамбльте ĕçлеме лайăх юрлакан, хĕрарăмсемпе арçынсем, çавăн пекех ташă ăстисем, музыка инструменчĕсем çинче лайăх выляма пĕлекен çынсем кирлĕ пулаççĕ. Ун пек çынсем пирĕн хуласемпе ялсенче сахал мар. Эпир партипе комсомол организацийĕсенчен, çутĕç органĕсенчен пире ансамбль валли пултаруллă çынсем суйласа илес тĕлĕшпе пулăшма ыйтатпăр.

Ф. ЛУКИН,

Ташăпа юрă ансамблĕн художествăллă руководителĕ.

Чугун шăратмалли кăмака-урапа çинче

Технологипе машиностроени институчĕ чугун, бронза тата алюмини шăратмалли кăмака тунă. Вăл вырăнтан вырăна куçса çӳрет. Ăна грузовой автомобильтен кăкарнă урапа çине вырнаçтарса лартнă, грузовикĕ çине — машинăсен тĕрлĕ пайĕсене шăратса тумалли машина вырнаçтарса лартнă.

Çав хатĕр кокс тата йывăç кăмрăкĕ çунипе ĕçлет. Унпа шăратмалли цехсем çук фабрикăсемпе заводсенче, куçса çӳрекен мастерскойсенче тата машинно-тракторнăй станцисенче усă курма пулать.

(ТАСС).

Харьковри завод туса кăларнă пĕрремĕш молотилкăсем

Харьковра ялхуçалăх машинисем туса кăларакан «Серп и молот» завод пирĕн пĕтĕм çĕршыв пĕлсе тăракан МК—1.100 маркăллă икĕ молотилка туса кăларнă. Çак уйăх пĕтиччен завод çавăн пек молотилка тата темиçе теçетке туса кăларать. Ун хыççăн вара молотилкăсене йышлăн туса кăларма пуçлаççĕ.

Пĕрремĕш молотилкăсене туса кăларнă ятпа заводăн центральнăй площадĕнче, Ленин памятникĕ патĕнче, завода юсаса ура çине тăратакан тата унта ĕçлекен рабочисен митингĕ пулса иртнĕ. (ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Агитаципе пропаганда ĕçĕнчи çитĕнӳсемпе çитменлĕхсем

Коммунистсене марксизм-ленинизм идейипе хĕçпăшаллантарса воспитани парасси парти организацийĕсем умĕнче тăракан чи пысăк та ответлă задачăсенчен пĕри пулса тăрать.

Юлашки вăхăтра ВКП(б) Красноармейски райкомĕ тата пуçламĕш парторганизацисем коммунистсене политикăллă воспитани парас ĕçе чылай лайăхлатрĕç. Харпăрхăй тĕллĕн вĕренекен коммунистсемпе партире тăман актива пулăшас ĕçе йĕркене кĕртнĕ. Семинарсемпе консультацисене йĕркеллĕн, тĕплĕн хатĕрленсе ирттереççĕ. Чылай коммунистсем ВКП(б) истори кĕске курсне, Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» çырнă кĕнекине хăйсем тĕллĕн вĕренеççĕ. Районри ертсе пыракан работниксене колхозниксем хушшинче политикăллă докладсем тума явăçтарнă.

Агитколлектив руководителĕсене суйласа илнĕ. Агитаторсен йышне пăхса тухса, ВКП(б) райкомĕнче çирĕплетнĕ. Районри 28 агитколлективра 300 агитатор ĕçлет. Агитаторсен составĕнче 64 коммунист, 100 комсомолец.

Агитаторсемпе агитколлектив руководителĕсене пулăшас майпа райкомăн парткабинетĕнче 18 хутчен тата участоксенче 27 хутчен семинарсем ирттернĕ. Кунсăр пуçне агитколлектив руководителĕсене калаçусене чĕннĕ, кăтартусем панă, вĕсен конспекчĕсене пăхса тухнă, ĕç планĕсене тĕрĕсленĕ. Райком бюровĕн ларăвĕсенче уйрăм агитколлектив руководителĕсемпе хăшпĕр агитаторсен отчечĕсене итленĕ. Çапла вара политикăллă агитаци ĕçĕ районра чылаях лайăхланчĕ.

Типçырма ялсоветĕнчи агитколлективра (руководителĕ Андреев юлташ) 18 агитатор. Вĕсенчен тӳрремĕнех колхоз производствине хутшăнса ĕçлекенсем 9 çын. Çураки вăхăтĕнче çеç агитколлектив членĕсем 12 номер стена хаçачĕ кăларнă, колхозниксем хушшинче 6 доклад, 41 хутчен калаçу туса ирттернĕ. Калаçусенче фронтовиксен çырăвĕсемпе усă кураççĕ. Агитатор-производственниксем хăйсем ĕçре пример кăтартаççĕ. «Пахарь» колхозри агитатор-комсомолецсем суха тунă çĕрте хăйсен нормисене 120—130 процент тултарса пынă. Ку колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн пурнăçласа пырать.

Агитациллĕ-массăллă ĕçе Калинин ячĕпе тăракан колхозри агитатор ВКП(б) членĕ Н. Павлов юлташ аван йĕркеленĕ. Лайăх ĕçлекен бригадăсене хавхалантарса пырас шутпа, куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялав тунă. Колхозра фото-хаçат тухса тăрать, унта чи лайăх стахановецсемпе стахановкăсене кĕртеççĕ. Агитатор Данилов юлташ колхоз ĕçĕнче пример кăтартать, вăл ĕç нормине тăтăшах 125—130 процент тултарса пырать.

Колхозсенче массăллă ĕçе лайăх туса пырас тĕлĕшпе вулав çурчĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Докладсемпе лекцисем ирттерес, литература суйласа илес, стена хаçачĕсем кăларас ĕçсем пĕтĕмпех колхозсенчи вулав çурчĕсенче пулса пымалла. Ку тĕлĕшпе те районра юлашки вăхăтсенче ĕç аванланса пыни курăнать. «Янмурзино» колхозри комсомолецсем вулав çурчĕн ĕçне тĕпренех лайăхлатрĕç. Вĕсем çурта юсаса илемлетнĕ, библиотекăна çĕнĕ кĕнекесемпе пуянлатнă. Вулав çурт совечĕн членĕсем пулма пултарулла çынсене суйланă. Вĕсен примерĕпе усă курса, районри чылай вулав çурчĕсен ĕçне йĕркеленĕ. Колхоз клубĕсенче час-часах спектакльсем, вечерсем, докладсем ирттереççĕ.

Яманак, Типçырма, Упи тата ытти ялсовечĕсенчи вулав çурчĕсем те хăйсен ĕçне юсанă. Анчах та Алманчă, Карай, Мăн Шетмĕ, Мартынкасси ялсовечĕсенчи вулав-çурчĕсем çаплах тивĕçлипе ĕçлеме тытăнман-ха. ВЛКСМ райкомĕ, райçутĕç пайĕ тата хăшпĕр уйрăм коммунистсем вулав çурчĕсене тивĕçлипе пулăшмаççĕ. Райçутĕç пайĕн вулав çурчĕсем енĕпе ĕçлекен инспектор та пур. Анчах та вăл вырăнсене сахалтарах тухса çӳрет, райçутĕç пайĕн заведующийĕ В. Еремеева юлташ ăна час-часах урăх ĕçпе командировкăсене ярать. Çутĕç пайĕ вулав çурчĕсен заведующийĕсем валли яланах семинарсем туса ирттересси çинчен манса кайнă.

ВКП(б) райкомĕн агитаципе пропаганда отделĕн ĕçĕнче те çитменлĕхсем сахал мар. Хăшпĕр коммунистсем хăйсен пĕлĕвĕсене, культурлăхне ӳстерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемеççĕ. Акă, А. Семенов, Борисов, Долгова, Морозова «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренме пăрахнă, Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренес тĕлĕшпе те нимĕн те тумаççĕ. Хăшпĕр коммунистсем час-часах: «Вăхăт çук, йывăр» теме пăхаççĕ. Çакă вăл пĕрре те тĕрĕс мар. Вĕренме, пĕлӳлĕхе ӳстерме нимĕнле йывăрлăх та, вăхăт çукки те кансĕрлеме пултараймасть, кахалланни çеç чăрмантарать. Коммунистăн вăхăта йĕркелеме пĕлес пулать.

Хăшпĕр ответлă работниксем агитаципе пропаганда ĕçне хутшăнмаççĕ. Вĕсем колхозниксем хушшинче политикăллă докладсем тума килĕшмеççĕ. Ку çитменлĕхсене пĕтермелле. Ертсе пыракан кашни работникăн колхозниксемпе колхозницăсем, предприятисемпе учреждениссенче ĕçлекенсем умĕнче политикăллă докладсем тăвас ĕçе активлăн хутшăнмалла.

Агитаципе пропаганда ĕçне татах та лайăхрах йĕркелесе, колхозниксен пĕтĕм вăйне тырпул пухса кĕртнĕ çĕре мобилизацилер.

С. ШАДИН.

(«Чăваш Коммуни» корр.).

Осоавиахим организацийĕсен ĕçне малалла лайăхлатассишĕн

Хĕрлĕ Çар вăрçă фрончĕсенче нимĕç захватчикĕсене аркатса, хĕвеланăçнелле хăваласа пынă кунсенче осоавиахим организацийĕсем партипе правительствăна пысăк пулăшу парса тăни пуриншĕн те паллă. Вăл, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ валли çирĕп резервсем хатĕрлесе, совет государствин çар вăйне тĕреклетет. Ялсемпе хуласенчи, предприятисемпе учрежденисенчи халăха сывлăшран тапăнассинчен сыхланма вĕрентет.

Кăçал 6 уйăх хушшинче осоавиахимăн районсенчи пуçламĕш организацийĕсем пиншер боец-стрелоксем, автоматчиксем, пулеметчиксем, минометчиксем, снайперсем, связистсем вĕрентсе кăларчĕç. Халăха çар ĕçне вĕрентмелли плана осоавиахимăн республикăри организацийĕ 91 процент пурнăçларĕ. Чылай пуçламĕш организацисем çумĕнче çар ĕçне вĕренмелли подразделенисем тунă. Вĕсенчен нумайĕшĕсем пуçламĕш программăна пурнăçланă, халĕ хăйсен пĕлĕвне малалла ӳстерсе пыраççĕ. Çав подразделенисенче вĕренсе, темиçе çĕршер çын çар специальноçне алла илчĕ. Халăха сывлăшран тапăнассинчен сыхланма вĕрентмелли плана 90 процент пурнăçланă.

Пуçламĕш организацисен хисепĕ çулран çулах ӳссе пырать. Кăçал 6 уйăх хушшинче 106 çĕрте çĕнĕрен организацисем тунă. Республикăра пурăнакан халăхăн 14,3 проценчĕ осоавиахим ретĕнче тăрать. Член укçине пухмалли çулталăкри плана 54,4 процент тултарнă.

Осоавиахимовецсем фронтпа тăван çĕршыва пулăшас тĕлĕшпе те нумай ĕçсем тăваççĕ. Вĕсем 30 тонна тимĕр-тăмăр, Хĕрлĕ Çар валли боевой машинăсем тума 300.000 тенкĕ укçа пухнă, фронтовиксем патне 3.000 парне ярса панă. Фронтовиксен çемьисене вутă турттарса парас, çĕр участокĕсене сухаласа тата акса парас тĕлĕшпе пулăшнă. Осоавиахим членĕсем оборона фончĕ валли 40 гектар çĕрулми лартнă. Канаш районĕнчи организацисем пĕр госпиталь валли 450 кĕпе-йĕм пухса панă. Шăхасан районĕнчи осоавиахимовецсем Хĕрлĕ Çар валли боевой машинăсем тума 9.600 тенкĕ укçа пухнă.

Çак çур çулта осоавиахимăн Шупашкар, Сĕнтĕр, Элĕк, Елчĕк райсовечĕсем тата Улатăр хула совечĕ лайăх ĕçленине палăртмалла.

Шупашкар райсовечĕ (председателĕ М. Васильев юлташ) çур çул хушшинче 58 çĕрте çĕнĕрен организацисем тунă. Ытти пуçламĕш организацисем те чăннăнах патриотсен организацийĕсем пулса тăчĕç. Тĕслĕхрен, «Туçа» колхозри пуçламĕш организациех илер. Ăна С. Григорьев юлташ ертсе пырать. Организацире çар ĕçне вĕренессине лайăх йĕркеленĕ. 21 осоавиахимовец боец-стрелок программине вĕренсе пĕтернĕ. Халĕ кунта татах стрелоксен подразделенине организациленĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех 6 инструктор вĕрентсе хатĕрленĕ. Çав инструкторсем 10-шар киле çӳресе халăха сывлăшран тапăнассинчен сыхланма вĕрентнĕ.

Агитациллĕ-массăллă ĕçе анлăн туса пынă. ПВХО çинчен лекцисемпе докладсем ирттернĕ. Ятарласа агитбригадăсем тунă. Ку ĕçе И. Матвеев юлташ ертсе пырать. Кашни бригадăрах 3-шер агитатор. Вĕсем кăçал çур çул хушшинче 68 тĕрлĕ массăллă мероприятисем туса ирттернĕ. Çав мероприятисене 12.000 çынна яхăн хутшăннă. Агитбригада «Снайпер» ятлă стена хаçачĕ кăларса тăрать.

Кун пек лайăх ĕçлекен организацисем районра татах та пур.

Шупашкар райсовечĕ, пуçламĕш организацисен ĕçне лайăхлатнипе пĕрлех, халăха çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе те тивĕçлипе ĕçлет. Çар ĕçне вĕрентмелли çулталăкри плана ултă уйăх хушшинче 103 процент тултарнă. 57 пуçламĕш организацире çар ĕçне вĕренмелли подразделенисем пур. Член укçи пухмалли плана райсовет 103 процент тултарнă. Çав вăхăт хушшинче пĕтĕмпе 4.078 тĕрлĕ массăллă мероприятисем ирттернĕ. Унта 154.930 çын хутшăннă.

Çавăн пекех халăха çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе Елчĕк райсовечĕ те тăрăшса ĕçлет. Вĕсем ку енĕпе çулталăкри плана 219 процент тултарнă.

Осоавиахим организацийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи ултă уйăхри итогĕсене пăхса тухнă хыççăн Шупашкар райсовечĕ мала тухни палăрчĕ. Осоавиахимăн Чăваш республикинчи совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Элĕк райсоветĕнчен илсе Шупашкар райсоветне памалла тунă. Шупашкар райсовечĕн председателĕ М. Васильев, Сĕнтĕр райсовечĕн председателĕ Тямков, Елчĕк райсовечĕн председателĕ Клементьев, Элĕк райсовечĕн председателĕ А. Васильев юлташсене лайăх ĕçленĕшĕн тав тунă, çакăнпа пĕрлех уйăхри ĕçукçи парса премилеме палăртнă. Кунсăр пуçне обществăллă инструкторсенчен чылайĕшне тав тунă.

Анчах та осоавиахим организацийĕсен ĕçĕнче çитменлĕхсем чылай-ха. Шăмăршă, Кувакино, Калинино, Куславкка райсовечĕсем питех те начар ĕçлеççĕ. Пуçламĕш организацисене ĕçре ертсе пымаççĕ.

Советски, Улатăр, Комсомольски, Красноармейски, Ишлей, Октябрьски, Тăвай райсовечĕсем халăха сывлăшран тапăнассинчен сыхланма вĕрентес тĕлĕшпе сӳрĕк ĕçлеççĕ. Пуçламĕш организацисене çирĕплетесси тата вĕсен йышне ӳстересси çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхмаççĕ, член укçисене вăхăтра пухмаççĕ.

Муркаш тата Чурачăк райсовечĕсем çак вăхăта çитсе те ĕçе тивĕçлипе пуçăнман.

Халĕ, Отечественнăй вăрçăн татăклă тапхăрĕнче, осоавиахим организацийĕсен фронта пулăшас енĕпе татах та ытларах çине тăрса ĕçлемелле. Кадрсем хатĕрлес, сывлăшран тапăнассинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма вĕрентес, осоавиахимовецсен йышне ӳстерес тĕлĕшпе ытларах тăрăшмалла.

Ĕçсыннисем хушшинче оборонăллă-массăллă ĕçе вăйлатса, Хĕрлĕ Çара çĕнĕрен çĕнĕ çĕнтерӳсем тума пулăшар.

А. НИКИТИН.

Ферапонт Головатый панă малтанхи самолет Саратова таврăннă

Саратова Ферапонт Головатый панă малтанхи самолета илсе пынă. Самолет çине çапла çырнă: «Сталинград фрончĕн летчикне Еремин майора — «Стахановец» колхозри Ферапонт Головатый колхозникрен». Çак самолет вăл — çулталăк çурă каярах Сталинград патĕнче çапăçусем пынă кунсенче çулăмлă патриот хăйĕн землякне Еремин летчика панă малтанхи самолет пулса тăрать.

Çак самолет вăл пысăк ĕç турĕ. Пăхма вăл халь те юсавлах, анчах та вăл хăй службине ирттерсе янă ĕнтĕ, кивелнĕ. Халĕ çав машинăна музее параççĕ.

Саратов хулинчи краеведени музейĕнче «Саратов облаçĕнчи ĕçсынчисем фронта пулăшни» ятлă выставка уйăлать. Çак самолета вара çав выставкăра кăтартаççĕ. (ТАСС).

Куç чирĕнчен сыватакан фельдшер

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). Арсентий Федорович районра паллă тата ăста фельдшер шутланать. Ăна ытти районсенчи колхозниксемпе колхозницăсем те питĕ лайăх пĕлеççĕ. Чирлĕ çынсене тӳрех ун патне илсе пыраççĕ. Вĕсене вăл ăшшăн кĕтсе илет, вĕсемпе кăмăллăн калаçать.

Иртнĕ çулта ун патне Çĕнĕ Йĕкĕт ачине 15 çулти Алексей Петрова илсе пынă. Ача чухне вăл трахома чирĕпе чирленĕ. Ун хыççăн куç шăрçине шурă карса илнĕ. Вăл сĕм суккăр пулса юлнă. Хут та вĕренеймен, хăй тĕллĕн нисте та çӳреймен, ăна çавăтса çеç çӳренĕ.

Фельдшер çак çамрăкăн куçне сыватас тĕлĕшпе нумай ĕçленĕ. Вăл тăрăшнипе Петров хăйĕпенех куракан пулнă. Куçĕсем пĕтĕмпех юсанса çитнĕ. Халĕ вăл «Свобода» колхозра ĕçлет. Вăл ĕнтĕ Хĕрлĕ Çара кайма та юрăхлă.

Упири фельдшер пунктне Шăхасан районĕнчи колхозниксем те мухтаса асăнаççĕ. Кивçурт Энĕшри Иван Порфирьева хăйĕн ял-йышĕсем сыва ретне тăрасса, куçлă пуласса ĕмĕтленмен, мĕншĕн тесен вăл 4 çул хушши нимĕн те курмасăр пурăннă, нимпе ĕç те тума пултарайман. Упире чаплă фельдшер пур тенине илтсенех, вăл хăйне çав фельдшер патне илсе кайма ыйтнă. Пĕтĕм совет халăхĕ урнă тăшманпа çапăçнă кунсенче вăйпитти те сывлăхлă Порфирьев Хĕрлĕ Çара тивĕçлĕ пулмасшăн çуннă.

Федоров юлташ çак çамрăка та куракан тунă.

Арсентий Федоров авторитетлă та ăста фельдшер. Вăл хăйĕн пĕлĕвне ӳстернĕçемĕн ӳстерсе пырать. Шкул ачисене санитари тĕлĕшпе вĕрентет. Пĕлтĕр вăл 92 çынна трахома чирĕнчен сыватнă, 217 çынна ГСО значокĕн нормисене пама хатĕрленĕ, 19 пĕрачана медсестрасем пулма вĕрентсе кăларнă. Вĕсенчен чылайĕшĕ халĕ колхозсенче медсестрасем пулса ĕçлеççĕ.

Федоров хăй ĕçне юратса тăвать. Халăх сывлăхне упрас тесе, хăйĕн пĕтĕм пĕлĕвĕпе вăйне хурса ĕçлет.

Редакцие килнĕ почтăран

Законсăр председатель законсене пăсать

Пирĕн Йĕпреç районĕнчи Кировски ялсовет председателĕ йывăр çын пулнă май отпуска кайнă хыççăн, унăн вырăнĕнче А. И. Иванова ĕçлеме тытăнчĕ. Ăна мĕнле йĕркепе председателе лартнине суйлавçăсем ăнланмасăрах юлчĕç. Мĕншĕн тесен вăл депутат та мар.

Унтан та ытларах суйлавçăсене Ивановăн ĕçĕсем кӳрентереççĕ. Вăл, тĕрĕссипе илсен, законсене пăхăнма юратмасть, хăй мĕн тăвас тенĕ çавна тăвать. Пĕррехине Хĕрлĕ Çар воинĕсен çемьисене валли уйăрнă тыррăн пĕр пайне хăй илнĕ. Колхозниксем государствăна сутнă çĕрулмипе шкул çĕрулмине хăйне валли илнĕ. Унсăр пуçне вăл тĕрлĕ майсемпе «Эконом» колхоз фермипе складĕнчен продуктсем нумай илнĕ. Суд решенийĕсем тăрăх сутмалли япаласене торги тумасăрах йӳнĕ хакпа хăй илет.

Çĕнĕ председателĕн çавăн пек киревсĕр ĕçĕсем çинчен района темиçе хутчен те пĕлтернĕ. Анчах нимĕнле мерăсем те йышăнман.

Çавна пула Иванова виçерен те тухма пуçларĕ ĕнтĕ. Вăл хăйне хирĕç калакан çынсене «тĕрмене хуптарап», «вăрман касма ярап» тесе хăратать, вĕсем çинчен элек сарма пикенет.

Законсăр председатель хăçанччен законсене пăсса ĕçлĕ-ши?

«Эконом» колхоз председателĕ Г. МАКСИМОВА,

ялсовет депутачĕ Л. УТКИНА,

колхозницăсем: ИЛЬИНА, ТРОФИМОВА, ТЕРЕНТЬЕВА.

Чăваш АССР Прокуратуринче

Юлашки вăхăтра уйрăм колхозсен председателĕсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленине пăснă тĕслĕхсем пур.

Шупашкар районĕнчи Красин ячĕпе тăракан колхоз председательне Замиков юлташа государствăна тырă париччен 5 центнер салатнăшăн 2 çуллăха тĕрмене хупмалла тунă.

Красноармейски районри «Трактор» колхоз председателĕ П. Е. Ярдушкин çĕнĕ тырăран государствăна пĕр килограмм та паман, çав вăхăтрах 26,44 центнер тырра колхозниксене валеçсе панă.

Çавăн пекех Елчĕк районĕнчи «Авангард» колхоз председателĕ А. Г. Григорьев та 42 центнер тырă салатса пĕтернĕ.

Ярдушкинпа Григорьева суда панă.

Литва ССР-ĕн Наука академийĕ çĕнĕрен ĕçлеме тытăнать

Вильнюс хулинче Литва ССР-ĕн Наука академийĕ çĕнĕрен ĕçлеме тытăнать. Халь академин библиотеки уçăлнă. Вăл — академин Вильнюс хулине нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă хыççăн ĕçлеме тытăннă пĕрремĕш учрежденийĕ пулса тăрать.

Наука академине 1941 çулта совет влаçĕ тунă. Вăл, Литвари чи пысăк ученăйĕсене пĕрлештерсе тăнă. Унăн институчĕсенче наукăна тĕпчев ĕçĕсем саралса кайнăччĕ. Литвăна тытса илнĕ хыççăн гитлеровецсем Литва интеллигенцийĕн чи лайăх пайне тĕрмесемпе лагерьсене хупнă. Наука академийĕн сотрудникĕсене, университетăн профессорĕсене тытса хупнă, лабораторисемпе музейсене аркатса тăкнă.

Хальхи вăхăтра институтсен юлнă оборудованине тата музейсемпе библиотекăсене йĕркене кĕртеççĕ. Профессорсен пĕр ушкăнĕ литовец чĕлхи словарĕн иккĕмĕш томне пичетлеме хатĕрлет. Çав словарĕн калама çук паха картотекине оккупантсенчен пытарса усранă, ăна республикăри чи паллă лингвистсем темиçе çул хушши пухса пынă. (ТАСС).

Вăрçă хыççăнхи гражданла авиацин ыйтăвĕсем пирки Совет Союзĕпе Америка калаçни

Кăçалхи июньпе июль уйăхĕсенче Вашингтонра, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви пуçарнипе, Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Совет Союзĕн представителĕсем вăрçă хыççăнхи гражданла авиацин ыйтăвĕсем пирки калаçнă. Вĕсем халь малтанлăха çеç калаçнă-ха. Пĕр-пĕрипе туслăн калаçнă.

Çав калаçусенче Совет Союзĕпе Пĕрлешӳллĕ Штатсен делегацийĕсем вăрçă хыççăнхи авиацин задачисем пирки тата вăл мĕнле аталанса пырасси пирки икĕ çĕршывăн интересĕсемпе шухăшĕсене ăнланса илнĕ. Уйрăмăн илсе кăтартсан, çакна палăртнă: тĕнчери сывлăш çулĕсемпе вĕççе çӳреме пулăшма гражданла авиаци тĕлĕшпе пĕтĕм тĕнчери комисси туни усăллă пулма пултарать. Çав икĕ делегаци пĕтĕм тĕнчери сывлăш транспорчĕ тĕлĕшпе тумалли техникăлла ĕçсене пĕр-пĕрипе килĕштермешкĕн сывăх вăхăтра Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Совет Союзĕн техника эксперчĕсем канашласси пирки те калаçса татăлнă.

Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен çарĕсем Францин кăнтăр çыранне аннă

ЛОНДОН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Вăтаçĕр тинĕсри хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕн пĕлтерĕвне парать. Çав пĕлтерӳре çапла каланă:

«Паян американецсен, акăлчансен тата французсен çарĕсем, союзниксен сывлăшçар вăйĕсем хытă пулăшнипе, Францин кăнтăр çыранне анма тытăнчĕç. Çав çарсем Америка, Англи тата Франци карапĕсем çинчен анаççĕ».

ЛОНДОН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Вăтаçĕр тинĕсри çарĕсен штабĕнчен Америкăри радио пĕлтернине парать. Çав пĕлтерӳре çапла каланă: союзниксен çарĕсем кăнтăр Францире десант антарнă чухне нимĕçсем вĕсене питĕ сахал хирĕç тăнă. Пĕрремĕш объектсем патне пĕр сехетрен те каярах вăхăтра çитнĕ. Çичĕ эшелон пехотăна çĕр çине икĕ сехетрен те каярах вăхăтра антарнă. Тул çутăлас умĕн çывăх хĕрринчен икĕ миля шаларахри территори çине парашютлă çарсем антарнă.

ВИЛЬСОН ГЕНЕРАЛ ФРАНЦИ ХАЛĂХНЕ ЧĔНСЕ КАЛАНИ

ЛОНДОН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Вăтаçĕр тинĕсри хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ Вильсон генерал паян ирхине Франци халăхне чĕнсе каланă. Вăл çапла каланă:

«Союзниксен армийĕсем Кăнтăр Франци çĕрĕ çине анчĕç. Вĕсен тĕллевĕ — нимĕçсене Францирен хăваласа кăларасси тата союзниксен Нормандирен куçса пыракан çарĕсемпе пĕрлешесси пулса тăрать. Французсен хĕçпăшаллă вăйĕсем çак ĕçе çĕр çинче, тинĕсре тата сывлăшра çапăçакан хăйсен союзникĕсемпе алла-аллăн тытăнса хутшăнаççĕ.

Франци çарĕ çĕнĕрен пурăнма тытăнчĕ. Вăл хăйĕн чаплă аваллăхлă çĕршывне ирĕке кăларасшăн пулса каллех хăйĕн çĕрĕ çинче çапăçать. 1918-мĕш çула аса илĕр. Пур французсен те — мирлĕ пурăнаканнисен те, çарта тăраканнисен те — кăнтăр Францири кампание хутшăнмалла. Сирĕн мĕн тумаллине сире кăтартса парĕç. Союзниксен радиовне итлĕр. Плакатсемпе листовкăсене вулăр. Инструкцисене пĕрре тепĕрне каласа парăр.

Пĕтĕм Франци çĕнĕрен ирĕклĕ пурнăçпа пурăнма пултартăр тесе, мирпе хăрушсăрлăх вăхăчĕ çиттĕр тесе, çак вăрçа часрах пĕтерер. Эпир çĕнтеретпĕрех! Сывă пултăр Францин çапăçас шухăшĕпе кăмăлĕ, сывă пулччăр вăл кĕрешекен тĕллевсем!»

АМЕРИКА ÇАРĔСЕН ВИР РАЙОНĔНЧИ НАСТУПЛЕНИЙĔ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: американецсен пехотипе танковăй чăçĕсем августăн 13-мĕшĕнче тулçуттипе Вир хулинчен кăнтăртарахри фронтра вăйлă наступлени пуçласа янă.

Нимĕçсем 30 миля сарлакĕш фронтра Сена шывĕ патнелле чакаççĕ. Тăшмана йывăр çухату кӳнĕ.

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ АРЖАНТАН ХУЛИ ПАТНЕ ÇИТНĔ

ЛОНДОН, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Мортэн хулипе Вир хули секторĕнче нимĕçсем каялла чакни ним тĕлли-паллисĕр тарпă пекех курăнать.

Союзниксен çарĕсен чылай пысăк вăйĕсем Аржантан хули районне çитнĕ.

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Орн шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем çĕнĕ çитĕнӳсем тунă. Союзниксен çарĕсем Клер Титон тата Доннэ пункчĕсене кĕнĕ. Сен-Пьер-ла-Вьей пунктĕнчен кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Кондэ хулине каякан çул тăрăх икĕ енĕпе те наступлени туса пыраççĕ. Союзниксен çарĕсем йывăр çапăçусем хыççăн Вир хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнелле куçнă. Кунтан кăнтăртарахра пирĕн çарсем каялла чакакан нимĕçсене Мортэн хули патнелле хăваласа пынă. Союзниксен çарĕсем минăсем лартса тултарнă вырăн патне пырса тухнă, вĕсене унта тăшманăн инçене перекен артиллерийĕ пеме пуçланă.

Бретаньре пирĕн çарсем çаплах Динар хулине атакăлаççĕ, тăшман унта хытă хирĕç тăрать. Нимĕçсен Сен-Мало хулинчи гарнизонĕн юлашкийĕсем крепоçра тытăнса тăраççĕ-ха. Брест хули çывăхĕнче союзниксен чăçĕсем кăштах малалла кайнă. Лориан хули патĕнче лару-тăру улшăнман.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн вăрçă объекчĕсене нумайĕшне хаяррăн тапăннă».

МОНТГОМЕРИ ГЕНЕРАЛ СОЮЗНИКСЕН ФРАНЦИРИ ÇАРĔСЕНЕ [illegible] ЧĔНСЕ КАЛАНИ

ЛОНДОН, августăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Монтгомери генерал союзниксен Францири çарĕсене чĕнсе каланă, çав чĕнсе калачине августăн 11-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă. Монтгомери генерал унта çапла каланă: «Котантен çурутравĕ пĕтĕмпех тата Бретань çурутравĕн чылай пысăк пайĕ пирĕн алăра. Пирĕн çар пĕр чарăнмасăр тата хăвăрт Франци ăшнелле кĕрсе пырать. Темиçе çĕр хулапа яла ирĕке кăларнă ĕнтĕ. 100 пин çынна ытла тыткăна илнĕ. Тăшманăн техникипе çар материалĕсене нумай пĕтерсе тăкнă».

Çурçĕр-хĕвеланăç Францире нимĕç çарĕсем йывăр условие кĕрсе ӳкнине палăртса, Монтгомери çапла асăрхаттарать: çав çарсем вĕсем, пĕтсе ларас мар тесе, çав тери хаяррăн çапăçĕç. «Вĕсене пĕтĕмпех тата яланлăха пĕтерсе лартăпăр, — тенĕ чĕнсе каланинче. — Çапла туса, эпир вăрçă пĕтес срока çывхартăпăр».

ЭЙЗЕНХАУЭР ГЕНЕРАЛ СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕНЕ ПАНĂ ПРИКАЗ

ЛОНДОН, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 12-мĕшĕнче союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй главнокомандующийĕ Эйзенхауэр генерал приказ панă. Приказра çапла каланă:

«Союзниксен салтакĕсем, морякĕсем тата летчикĕсем! Эсир хăвăр ăсталăха, паттăрлăха тата вăй-хăвата пула Францире союзниксене пысăк çĕнтерӳ тума май туса патăр, çак çĕнтерӳ вăл тăшмана татăклăнах аркатса тăкас çул çинче тунă пысăк çитĕнӳ пулнă пулĕччĕ. Анчах та эсир туса панă май ахалех тăрса юлма пултарать. Çапла ан пултăр тесен, питĕ тăрăшса, хастарлăн тата хăвăрт кĕрешмелле. Тепĕр енчен, халĕ эпир тума пултаракан çĕнтерӳ эпир Хĕвеланăçĕнче ку таранччен тунă кирек хăш çĕнтерӳрен те нумай пахарах. Çавăнпа та эпĕ сире халь çапла калатăп (çак чĕнӳ вăл хăçан та пулин чĕнсе каланисенчен темĕн чухлĕ пахарах пулса тăрать)».

Эйзенхауэр генерал летчиксене, моряксене тата салтаксене тăшмана пĕр вĕçĕмсĕр, кăнтăрла та, каçпа та вăйлă пырапыра çапма чĕнет, тăшмана хăрушлăхран тарса ӳкме памалла мар, пулăшу илме май памалла мар, тет.

Приказра юлашкинчен çапла каланă: «Эпир пурте хамăра кашнине ятарласа панă задачăсене хăюллăн та татăклăн пурнăçа кĕртсе пырсан, эпир çитес эрнене çак вăрçă историйĕнчи чи чаплă эрне туса хунă пулăттăмăр, вăл эрне пирĕншĕн питĕ мухтавлă та усăллă эрне, нацист тиранĕсен шухăшĕсене пуçĕпех пĕтерсе лартмалли эрне пулса тăнă пулĕччĕ».

ФРАНЦУЗ ПАТРИОЧĔСЕН ИКĔ УЙĂХ ХУШШИНЧИ ĔÇĔСЕМ

АЛЖИР, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Алжирти радио наци оборони штабĕн пĕлтерĕвне панă. Çав пĕлтерӳре Францири патриотсем июнĕн 6-мĕшĕпе августăн 6-мĕшĕ хушшинче тунă ĕçсем çинчен каланă.

Союзниксен çарĕсем Çурçĕр Франците пырса кĕрес умĕн икĕ уйăх малтан французсен патриочĕсем 400 паровоз тата 2.000 вагона юрăхсăра кăларнă. Нимĕçсем валли ĕçлесе тăнă предприятисенче 450 хутчен сăтăрла ĕçсем тунă.

Союзниксен çарĕсем Çурçĕр Франците пырса кĕрсен, Францири патриотсем хăйсем умне нимĕçсен Нормандие каякан транспортне ĕçлейми тăвас задача лартнă. Малтанхи 6 эрне хушшинче Парижпа Норманди хушшинче вĕсем 180 крушени тунă.

Германи çарĕсене горючи парса тăрас ĕçе те вĕсем тăтăшах кансĕрлесе тăнă. Пĕр эрне хушшинче кăна нефтьрен тĕрлĕ япаласем тăвакан икĕ завода ăнăçлăн тапăннă, цистернăсен эшелонне сирпĕнтерсе янă, газолин тиенĕ 5 баржăна вут тивертнĕ.

Тăшмана çынсем тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тӳстернĕ.

Пĕлтерӳре юлашкинчен çапла каланă: француз патриочĕсен отрячĕсем нумай французла союзника вилесрен çăлса хăварнă, вĕсем Бретаньре хăйсен вăйĕпех нумай пункт тытса илнĕ.

ЧЕРЧИЛЛЬ ТИТО МАРШАЛПА ТАТА ШУБАШИЧПА ТĔЛ ПУЛНИ

ЛОНДОН, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: «Августăн 12-мĕшĕпе 13-мĕшĕнче премьер-министр Уинстон Черчилль Италире Югославин премьер-министрĕпе Шубашичпа тата Тито маршалпа тĕл пулса калаçнă. Çав калаçура политика тата вăрçă ыйтăвĕсене пĕр-пĕринчен ним пытармасăр сӳтсе-явнă. Тито маршалпа Югославин премьер-министрĕ Шубашич çавăн пек калаçусем малалла та туса ирттересси çинчен сĕннĕ. Вăл калаçусем икĕ енĕ те палăртнă тĕллеве пурнăçлама пулăшмалла, çав тĕллев вăл — Югослави пурнăçне пур енчен те лайăхлатса яма анлăн пулăшса тăрасси пулать».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00636 Типографи № 1, Управлени полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. 6, 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.